Партисемпе юхăмсенче

# Стратеги те, кандидатсем те паллă

"Пĕрлĕхлĕ Раççей" ("Единая Россия") политика партийĕ çĕршыв аталанăвĕпе хăватлăхĕшĕн, унти тĕрлĕ наци çыннин пурнăç условийĕсене лайăхлатассишĕн тĕллевлĕ ĕçленипе палăрчĕ, çавăнпах унăн ячĕ-сумĕ те ӳсрĕ, йыш та хутшăнчĕ. Унăн позицийĕсене ырлакан та, пулăшакан та сахал мар. Партин регион уйрăмĕн уйăх çурă каярах иртнĕ вун иккĕмĕш отчетпа суйлав конференцийĕнче Чăваш Енри парти членĕсем хăйсен ертӳçи пулма каллех Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председательне М.А. Михайловские суйларĕç. Иртнĕ тапхăрти тунă ĕçсене пĕтĕмлетнĕ, малашлăхри тĕллевсене палăртнă хыççăн ун чухне Михаил Алексеевич массăллă информаци хатĕрĕсенче ĕçлекенсене тĕп тĕллев кăçалхи раштав уйăхĕнче Патшалăх Думин, çитес çулăн пуш уйăхĕнче Раççей Президенчĕ суйлавĕнче çĕнтерессри пулнине уççăн пĕлтерчĕ: "Чи кирли – пурте пĕрле, партин рядовой членĕнчен пуçласа унăн хастарĕ, пуçламăш, вырăнти уйрăмĕн ертӳçи таранах пĕр тĕллевпе ĕçлемелле. Регионти уйрăм, Патшалăх Канашĕнчи "Пĕрлĕхлĕ Раççей" фракци халĕ ĕçленĕ пек – республика Президенчĕпе тата правительствипе, хула-район пуçлăхĕсемпе алла-аллăн тытăнса. Суйлав умĕнхи пирĕн стратеги тахçанах паллă, уçăмлă. Партишĕн вăл пурнăçланă ĕçсене кăтартмалла, оппонентсем евĕр пуш сăмах авăрса хывăх вĕçтермелле мар..."

Партин регион уйрăмĕн тунти кун иртнĕ вырăнти уйрăмсен представителĕсен анлă Пухăвĕнче Пĕтĕм Раççейри "Пĕрлĕхлĕ Раççей" политика партийĕн кадрсен резервне сĕннĕ кандидатурăсен списокне сӳтсе яврĕç.

Патшалăх Думине Чăваш Енрен суйланма кама кандидата сĕннине ыйтсан Михаил Алексеевич вĕсен хушамачĕсене тӳрех асăниччен хăйĕн шухăшне палăртрĕ: "Хальхи суйлав пĕтĕмпех парти списокĕпе иртет. Партин федераци спискĕсĕр пуçне Чăваш Енĕн регион ушкăнĕ пулать. Çурла уйăхĕнче пулас депутатсен кандидатурисене эпир партин пуçламăш тата вырăнти уйрăмĕсенче тĕплĕн тишкертĕмĕр. Ун хыççăн вĕсен хушамачĕсене çирĕплетме регион уйрăмĕн конференцийĕ съезда сĕнет. Пирĕн кандидатсен списокĕнче чăннипех сумлă, ырă ят çĕнсе илнĕ, республикăшăн нумай ĕçлекен, кĕскен каласан, ĕç çыннисем".

Çĕршывĕпе хатĕрленĕ списокра 1250 çын хушамачĕ. Чăваш Республикипе унта 11 кандидат. Чăваш регион уйрăмĕ ăна икĕ ушкăна пайлама сĕннĕ. Пĕрремĕш "А" ушкăнра – Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров, ЧР Патшалăх Канашĕн председателĕ М.А. Михайловский, Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин çĕршывсен хушшинчи ĕçсен комитечĕн председателĕ, "Пĕрлĕхлĕ Раççей" политика партийĕн генеральнăй Канашĕн президиумĕн секретарĕн çумĕ К.И. Косачев, РФ Патшалăх Думин депутачĕ П.В. Семенов, Раççей Геройĕ Н.М. Бударин космонавт-летчик, "Б" ушкăнра – Раççей Геройĕ Е.Г. Борисов, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн студенчĕ И.Ш. Калмыков, Патăрьел районĕнчи "Малалла" тата "Первомайск" хуçалăхсен председателĕ М.В. Петров, Президентăн перинаталь центрĕн тĕп врачĕ А.В. Самойлова, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн темиçе суйлаври депутачĕ Е.Д. Сергеева пенсионерка тата Кӳкеç ял тăрăхĕн депутачĕсен Пухăвĕн депутачĕ, "Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн" Çамрăк Гвардин Шупашкар районĕнчи уйăрмĕн ертӳçи А.В. Юрьев. Каярахпа "Пĕрлĕхлĕ Раççей" партин кадрсен резервĕн никĕсĕ çинче "Çĕршывăн профессилле команди" парти проекчĕпе килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Думин депутачĕсен кандидачĕсен списокне йĕркеленине асăнса хăварни те вырăнлă çак тĕлте.

Çак проект чылайăшне кăсăклантарать. Мĕнре-ха унăн тĕшши? М. Михайловский шухăшĕпе, "паллă ĕнтĕ, кадрсем пурне те татса параççĕ. Халăх хуçалăхĕн пур отраслĕнчи хастар, мал ĕмĕтлĕ çынсене тĕплĕн суйласа илсе вĕсене парти ĕçне хутшăнтарасси – çакăнта асăннă проектăн тĕллевĕ. Ăна парти пуçарăвĕпе йĕркеленĕ пулсан та, партин саккунĕсене çирĕп пăхăннине тата хăш партире пулнин критерийĕсене палăртмасть вăл. Пирĕн шутпа, çак проект патшалăхăн анлă задачисене, уйрăм партин тĕллевĕсене мар, татса парать. Унта кĕме тивĕçнисене тĕрлĕ шайри депутатсен кандидатне, муниципалитет пĕрлĕхĕн пуçлăхĕн должноçне тата ытти вырăна сĕнме палăртатпăр, вĕсем партин кадр резервĕ пулĕç. Проектăн юлашки тĕллевĕ вара – çĕршыв валли ăслă-тăнлă, пултаруллă çамрăксенчен управлени элити хатĕрлесси".

**Ю. ЛИСТОПАД.**

Водительсене асра тытма

# Штраф виçисем ӳсеççĕ

Январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса çул-йĕр правилисене пăснăшăн штраф виçисем самаях ӳстереççĕ. Правилăсене пăхăнман водительсен кĕсйисене вĕсем самаях «çӳхетме» тивĕç. Акă, палăртнă виçерен хăвăртлăха ӳстернĕшĕн сехетри километр виçине кура:

20–30 км. – 300 тенкĕ;

40–60 км. – 1 пин тенкĕрен тытăнса 1,5 пин тенкĕ таран;

60 км. ытла пулсан – 2 пин тенкĕрен тытăнса 2,5 пин тенкĕ таран е 4 уйăхран тытăнса 6 уйăх таран правасăр хăварĕç.

Çул хĕррине тухса кайнăшăн 500 тенкĕ тӳлеме тивет. Çуран çӳрекенсен тата велосипед çулĕсем çине кĕнĕшĕн – 2 пин тенкĕрен тытăнса. Хирĕç килекен трамвай çулĕ çине тухнăшăн – 1–1,5 пин тенкĕ.

Руль умĕнче «handsfree» устройствăсăр кĕсье телефонĕпе калаçнăшăн 300 тенкĕ тӳлеттерĕç. Техосмотр тăман транспортпа çӳресен 200 тенкĕ тӳлемелле пулать.

Хирĕç килекен транспорт полоси çине тухнăшăн айăплине 4 уйăхран тытăнса 6 уйăх таран правасăр хăварма пултараççĕ. Светофорăн хĕрлĕ çутипех кайрăр – 700 тенкĕ тӳлĕр. Хăрушсăрлăх ременьне çыхман пулсан вара 500 тенкĕ штраф тивет.

Пиллĕкмĕш ĕç чĕрĕкĕ пырать

# Çамрăк "Хунавăн" хунавĕсем хуначчăр

Кĕçех çĕнĕ вĕренӳ çулĕ те пуçланĕ. Унччен вара Нискассинчи "Хунав" экологи лагерĕнче канăва усăллă иртгернĕ ачасен аса илмелли нумай-ха. Лагерь ĕçлеме пуçланă кунран тытăнса мĕн смена вĕçлениччченхи кунсене. Июнь уйăхĕнче 20



ача мĕн кăна пĕлмерĕç пулĕ хамăр тавралăх пирки, мĕн кăна тумарĕç пулĕ тăван тавралăх илемĕшĕн "Лĕпĕшсемпе" "Кукша пуçсем", "Пыл хурчĕсемпе" "Салтак тӳмисем". Шăп çакăн пек 4 звено çине пайланнă лагерьти ачасем малтанхи кунах хăйсене лагерь мĕн пама пултарни пирки "Брейн-ринг" ирттерчĕç. Ара, кун пек лагерь кăçал пĕрремĕш хут йĕркеленчĕçке. Çуллахи вăхăтра шкулсем çумĕнче йĕркеленекен ытти лагерьсенни пекех ăна



та ачасен çуллахи канăвне усăллă ирттерччĕр тесе йĕркелерĕç: вĕренекенсем урамра йытă хăваласа ан çӳреччĕр, сывлăхне çирĕплетчĕр, лагерьте ирттернĕ пĕтĕм воспитани, экологи, краеведени, физкультурăпа спорт, культурăллă-массăллă ĕçсене çак тĕллевпе çыхăнтарчĕç. 20 çамрăк эколог вара мĕн кăна çĕннине, усăллине пĕлмерĕç пулĕ – йăлтах пурнăçра кирлĕ вĕсем.

Интересли вара лагерь ĕçлеме пуçланă тепĕр кунхинех пуçланчĕ. "Экологовичок" старик вĕсене "шыва кĕртсе" эколог ятне пачĕ те пурте пĕрле Силтек вăрманне кайрĕç. Силтек çăл куçĕнчи шыв чирлисене те сыватать, тенине ялта калаçкалатчĕç-ха. Мĕн çинчен шутлать-ши çав тăрă çăлкуç тесе ыйтсан, ачасем пĕринчен тепри кăсăклăрах хуравсем пачĕç: чи малтанхи таса туйăмсене çуратакан тăван тавралăха юратса шăнкăртатать иккен вăл. Ачасен хуравĕсем килĕшрĕç "старике". Эппин, ку ачасенчен çут çанталăк тусĕ пулатех. Çакна ачасем экологсен кунĕнчех çирĕплетрĕç. Ялсенче экологи субботникне ирттерчĕç: урамра йăваланса выртакан пĕтĕм çӳп-çапа, пластик савăтсене пуçтарчĕç, "Катюша" магазин патĕнчи чечек клумбисене йĕркене кĕртрĕç. Шкулти чечек кĕтесĕсене шăварнипе пĕрлех шăрăхра кунти чечексем пирки те манса каймарĕç.

Каннă хушăра та ачасем илемлĕх тĕнчинчен уйрăлмарĕç. Асфальт çинче те çут çанталăкпа çыхăннă сăнсене ӳкерчĕç вĕсем. Еплерех ырлăх иккен тăван ялти салтак тӳмисемпе витĕннĕ симĕс кавир тăрăх çарран чупма та, унтан-кунтан чĕпĕтекен вĕлтĕрене пуçтарма та. Ку ĕçе пуçличчен вĕсем çак ӳсен-тăран усăллине те нумай пĕлчĕç. Ара, «Экологовичок» старик ун пирки каласа панипех çырлахмарĕç вĕсем. Мĕн чуль кĕнеке, справочник тăрăх тупмарĕç пуль çĕннине вĕлтĕрен çинчен. Пĕр харăсах çапла майпа çамрăк экологсем пĕрре персех темиçе мулкача тытрĕç: вĕлтĕрен пуçтарса чирлисене валли эмел тума пуçтарса пачĕç. Шкулти актовăй залне вырнаçманнисене коридорсене хурса тухса типĕтрĕç. Смена тăршшĕпе çак 20 ача 121 килограмм эмел курăкне пуçтарса типĕтсе пачĕ. Çак усăллă ĕçе туса çавăн пекех пушă ларакан лаша витин, унсăр пуçне сысна фермин территорийĕсене вĕлтĕренсенчен тасатса хăт кĕртрĕç. Паян "Хунав" лагерьте каннă кашни ачах лайăх пĕлет: вĕлтĕренпе туслă пулсан, унран пĕçерне яшка-чейпе тата ыттипе туслашсан, сăнран та шуранка пулмăн, витаминсем санра сиккелесе çеç çӳрĕç. Кавказра пурăнакансем вĕлтĕренпе туслă пулнăран вăрăм ĕмĕрлĕ пулнине те каярахпа ирттернĕ "сиплевçĕ касĕнче" пĕлчĕç. Ав мĕнле иккен. Йĕри-тавра витамин, эмел – çĕннине пĕлме, усă курма çеç ан ӳркен. Вара çитмĕлте те çиччĕри пек çăмăл туйăн хăвна.

Лагерьте иртекен кашни мероприятире ачасем çут çанталăк илемне курчĕç, ăна упрамаллине ăнланчĕç. Епле манса кайăн-ха, сăмахран, кунĕпех вĕлтĕрен пуçтарса ураран ӳкме хатĕр ачасем "Лагерьти чи лайăх ташăçă" конкурса ирттернине. Ытлашши хусканусем те тăвас килмен ачасене вĕсен тантăшĕ Анюта Иванова "хускатса" ячĕ. Кашни мĕнле те пулин кайăк, чĕрчун ташшине кăтартса памалла. Куççем пурин те çуталсах кайрĕç. Эх, пуçланчĕ вара. Пакши те, тилли те, шапи те ташша ячĕ. Чи пултарулли вара шăрчăк пулчĕ. Юлташĕсем ăна Игорь Сорокин тесе чĕнеççĕ иккен. Сипсимĕс тум тăхăннăскер шăрчăкла ташланине чăн шăрчăксем хăйсем курсан та савăннă пулĕччĕç.

Вĕсем кăна-и? Пушă вăхăтра тантăшĕсем валли хатĕрленĕ çемçе теттесем те хĕпĕртеççĕ ав. Шкул мастерскойĕнче хĕрачасем "никтошкăсемпе" "капитошкăсене", ытти теттесене ăсталарĕç тантăшĕсем валли. М.Н. Пушкарева вĕсене вĕренӳ çулĕ тăршшĕпех илеме алла илме хăнăхтарать-çке. Халĕ те вăл ачасемпе пĕрле. Вĕсен воспитателĕ. Пĕр кунхине тата вĕсем пĕрле (лагерь ертӳçи С. С. Димитриева та вĕсемпе пычĕ) Шупашкарти юхан шыв портне кайрĕç. Юринăри Шереметьев замокне кайма пуçтарăннă кун çанталăк уçăрахчĕ çав. Каютăна ăшăнма кĕрсех унтан палуба çине чупса тухса, каллĕ-маллĕ хутланă хушăра вырăна çитнине те сисмерĕç. Хавасланса калаçакан ачасем шăпланчĕç. Темĕскер, çĕнни, сăмахпа каласа ăнлантараймалла марри вырнаçрĕ вĕсен чĕрине. Мăнастирте те вĕсемшĕн интереслĕ пулчĕ.



Çамрăк "Хунавсем" лагерьте аслисене хăйсем чăннипех çут çанталăк тусĕсем пулнине çирĕплетсе пачĕç. Çак темăпа Ярославка, Чăршă, Елшик, Чемей тата Яргейкин ялĕсенче пурăнакансемпе пуху ирттерчĕç. Калаçмалли вара вĕсен тупăнсах пычĕ: шыва, ял урамĕсене вараламалла мар тата ытти те. Ачасемпе çитĕннисен пĕр тĕллев пулмалла вĕт. Таса ялта пурăнасси кашнинченех килет. Тĕл пулу ачасен юрри-ташшипе вĕçленчĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г. В. Пайгусов хăй те пулчĕ ку тĕл пулура. Вăл ял, район ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарнине ачасем те кăсăклансах итлерĕç.

Мĕнле манса кайăн-ха тата ачсем ватăсем патне кайса вĕсене пулăшнине. "Лĕпĕшсемпе" "Пыл хурчĕсем" Ю. М. Палтанкин патĕнче пулчĕç. "Кукша пуçсемпе" "Салтак тӳмисене" вара 80 çулхи вĕрентекен хаваспах кĕтсе илчĕ. Феофил Филиппович Яранский хăй вăхăтĕнче çут çанталăка хӳтĕлемелли ĕçсемпе паларса тăнă. Хăйĕн пахчинче ӳсекен кăвак чăрăшсемпе ытти йывăçсем чăннипех те тăван тăрăх илемĕ пулса тăраççĕ. Мучи пыл хурчĕсем те тытать иккен. Пĕрле ĕçленĕ хыççăн ачасем аслă вĕрентекенĕпе ларса пылпа чей ĕçрĕç.

Кашни уява ачасем лагерьте паянхи пурнăçпа çыхăнтарчĕç. Раççей суверенитечĕ çинчен калакан Декларацие йышăннă кун акă тепĕр интереслĕ япала пĕлчĕç. Раççей Гимнĕн авторĕпе Сергей Михалковпа вĕсен воспитателĕ М.Н. Пушкарева "Чувашия" санаторинче пĕрле каннă иккен. Халĕ ав вĕсем патĕнче тепĕр паллă çын ЧР, РФ культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Клара Чекушкина юрăçă хăнара пулчĕ. Вăл парнеленĕ дискри юрăсем пурнăç илемĕ йăлтах хамăртан килнине аса илтерсе, тавралăх илемне курма-упрама, пурнăçа юратма вăйхал парса тăрать.

Тавралăх илемĕ тенĕрен, Муркаш тăрăхĕ ытла та илĕртӳллĕ-çке вăл. Ачасем Çуткӳле те çитсе килчĕç. Кунта тем тĕрлĕ пулă пурăнни пирки илтнĕччĕ-ха вĕсем. Хальхинче хăйсем тытса пăхсах ĕненчĕç. "Лагерьти вăр-вар пулăçă" ята М. Матвеев тивĕçрĕ. 15 минут хушшинче 7 пулă тытрĕ. Пĕри те каялла çырмана тармарĕ. Маргарита Николаевна ав пĕчĕк чух ашшĕпе пулă тытса ларнă чух пулли каялла шыва сикнĕ те – Маргарита та ăна тытас тесе ун хыççăн шываллах вирхĕннĕ.

Тата тем те пĕр аса илеççĕ паян "Хунав" лагерьте пулнă арçын ачасемпе хĕрачасем. Ара, мĕн тĕрлĕ конкурс иртмерĕ те-ха. Йăран çинче ĕçленĕ, эмел курăкĕ пухнă, тавралăха тирпей-илем кӳнĕ хыççăн пĕрле савăннине мĕн çиттĕр. И. Сорокин, Н. Мигушов, Н. Бряндинская тата ыттисем тĕрлĕ номинаци çĕнтерӳçисем пулса тăчĕç. Мĕн тĕрлĕ спорт ăмăртăвĕсем иртмерĕç пулĕ тата. Лагерьте дежурнăй пулнисем, ял хуçалăх ĕçĕнче тăрăшнисем, паркпа палăк умĕнче тирпей-илем кӳнисем, лагерьте пурнăçланă кашни ĕç – йăлтах ачасене хăйтĕллĕнлĕхе хăнăхтарать. Паян мĕн тунисем пурте пурнăçра кирлĕ пулаççĕ. Ачасем ĕçре пиçĕхрĕç çеç мар, ăс-хакăл енчен те аталанчĕç, мĕн чуль çĕннине пĕлмерĕç пулĕ. Мĕн тĕрлĕ диспут иртмерĕ пулĕ, ăçта кăна походра пулмарĕç пулĕ. Ачасем пĕр-пĕринпе татах та ытларах çывăхланчĕç. Вĕсенче пĕрлĕх туйăмĕ вăйлăрах палăрма пуçларĕ. Çамрăк "хунавсем" пурнăçра кирлĕ мĕн пур ырă сĕткене илчĕç "Хунав" экологи лагерĕнче. Кашни çынна активмелĕх те пур вăл вĕсен. Çакна районта та тӳрех курчĕç: çулла йĕркеленнĕ лагерьсем хушшинче Нискассинчи "Хунав" экологи лагерĕ пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсем республикăра район чысне хӳтĕлеме хатĕрленеççĕ. Хăйсен ырă опытне ытти районсенчи ачасене паллаштарĕç. Çамрăк "Хунавĕн" ырă сĕткенĕ тăван тавралăха юратас-упрас туртăм çапла майпа ытти районсенчи тантăшĕсене валли те çитĕ. Чĕрĕ хунавăн сĕткенĕ тавралăха чĕрĕлĕх кӳтĕр. Çапла майпа тăван Нискасси, Муркаш тăрăхĕ çеç мар, республика, Раççей, пĕтĕм çĕр чăмăрĕ пин-пин чечеклĕн ешертĕр. Мирлĕ таса тӳпе айĕнче ачасен хаваслă сасси янăратăр. Çакăнта-çке пурнăç пĕлтерĕшĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: лагерьти кунсем.**